**Музыка**

Темскер çунать каллех, темскер йăлтăртатать,
çĕклет те путарать — ăçта эп, мĕн эп, кам?
Ман аллăм çумĕнче ик ал кăштăртатать, —
ӳсет, пурнать, сӳнет, çунать унта такам.

Эп юр пек чӳхенетĕп, эп курăк пек таса,
юр чунĕ — юр çути, ман чунăм — эпĕ хам.
Ман çаннăм çумĕнче сан çаннуна туйса
çунса вăйран каям, йăлт — витĕр! — ыратам.

Итлени мар ку, çук! - Бетховен антăхса
хăй сывлăшне хуллен хăй çавăрса яма
çӳлтен вăй кĕртнĕ чух — эп хам та ăнтăлса
кĕтеп сан сывлăшна — сана лăплантарма.

Кĕтмен чухне эп — çук, эп кĕтнĕ чух çеç пур...
Юр евĕр чӳхенет Тăваттăмĕш концерт.
Ман çумăмра — ман çын, ман тĕлĕк, ман шур юр,
анчах хăратăп эп — ман хул ăна лекет.

Яр çутă сĕркĕчсем хĕлĕхсене тивни,
йăл-ялтăр çутăсен вĕри ушкăнĕсем —
пĕр çирĕп йĕр пекех... Çав йĕрĕн уйрăлми
ялтравлă вĕçĕ вăл — сан çутă çаннусем.

Шутлаймăп эп хама çав йерĕн шутĕнче.
Эп ун тавра хĕм çеç, эп хĕм çеç — сан тавра.
Эс ал паран мана... Çак алă вĕçĕнче

хӗм пек хыпса илсе сӳнетӗп урамра.

1959

*Айхи, Г. Музыка : [сӑвӑ] // Айхи, Г. Сӑвӑсемпе поэмӑсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 103.*